## Тăвансем кĕтеççĕ

Пĕчĕк Стасик аслашшĕ Казимир темшĕн тăтăшах Седличи местечкине çӳреме тытăнчĕ. Урамра сивĕ çумăр шăпăртатать, пахчари йывăç тураттисене çил тулать, вăл яланхиллех хăйĕн кĕске кĕрĕкне тăхăнса лартать те хĕвел тухăçнелле тухса утать.

Стасик пӳртре пĕчченех тăрса юлать.

Тулта кĕркунне. Тӳпере, пăтранчăк шыв пек, талккишпех хуп-хура пĕлĕтсем йăшăлтатаççĕ. Мĕн иртен пуçласа каçчен, унтан çĕрле пуçласа ирччен çумăр çăвать. Аслашшĕ таврăнасса кĕтсе мăнукĕ кăмака çине хăпарса ларать те урисене кивĕ сăхманпа пĕркет. Пахча енчи чӳречен çӳлти кĕтессинчен сарă йăмра çулçи курăнать, çилпе çенĕк алăкĕ уçăла-уçăла хупăнать, тĕпел кукринче шыв тумлани илтĕнет.

Стасик, йывăр хуйхăпа анраса ӳкнĕ мăн çын пек, майĕпен енчен енне сулланса тĕлĕрме тытăнать. Те сивĕ, те ăшă, те хуйхăрать, те ним çинчен те шухăшламасăр тĕлĕрсе ларать — ăна вăл хăй те лайăххăн пĕлмест. Унăн чĕрине темĕнле йывăр та паллă мар хăрушлăх пусса тăрать.

Çывăрса каяс тесе ача аслашшĕ сăхманĕпе пуç çинчен пĕркенет те куçне хупать. Анчах кăшт ăшăнсанах вăл вăрçăччен ашшĕпе пыл татма кайнисене, чечексем çинче хуртсем сĕрленине, ăшă та тӳлек кунсене аса илме пуçлать. Сĕр-сĕр-сĕр-сĕр! сĕрлеççĕ вара хуртсем кăмăллăн та çепĕççĕн. Çурхи вăрманта кайăк-кĕшĕк чĕвĕлтетет. Таçта йывăç çинче сиксе куккук авăтать. Пыл шăрши кĕрекен сывлăша кăкăр туллин сывласа Стасик çырма хĕрринелле чупать...

Савăнăçлă асаилӳ татăлать. Пĕр вăхăта тăн-пуçа темĕнле хура тĕтре карса илет, ăша сулхăн çапать. Станислав каллех утарти сăн-сăпатсене аса илесшĕн, анчах ун вырăнне куç умне ашшĕ Хĕрлĕ Çарпа пĕрле ялтан тухса кайни, амăшĕ хăйне Германие тытса кайнă чух выртса макăрнисем килсе тухаççĕ. Унтан вăл яла нимĕç салтакĕсем килсе кĕнине аса илет те сасартăк вăранса тарласа каять, куçне чарса пăрахать. Вара çенĕк алăкĕ уçăла-уçăла хупăнни те, шыв тумлани те уççăн илтĕнме пуçлаççĕ. Чӳрече умĕнче çаплах сарă çулçă вĕлтĕртетсе тăрать, пӳрт пĕренисем çумне кассăн-кассăн çумăр шăпăртатса çапăнать. Те кăнтăрла çитнĕ, те каç пулать — нимĕн те паллă мар. Станислав урайне анса сĕтел сунтăхĕсене уçса пăхать. Анчах унта çăкăр татки мар, пĕр тĕпренчĕк те çук. Вăл ĕсĕклекелесе каллех кăмака çине хăпарса ларать, майĕпен енчен енне сулланма тытăнать. Пĕчĕк Стасик ăшĕнчи пекех, тулта тĕксĕм те кичем. Ачан макăрас килет. Хăйĕн ашшĕ çухални çинчен, амăшне нимĕçсем тытса кайни çинчен, хăйĕн хырăмĕ выçни çинчен темĕнле çывăх та кăмăллă çынна каласа парас килет унăн...

* * *

Пĕррехинче ватă Казимир Седличи местечкине хăйпе пĕрле Стасика та илсе кайрĕ.

Пасар урамĕнче пăртак çӳресенех пĕчĕк мĕшĕлти ывăнса ӳкме пуçларĕ. Сăхманĕн арки çине пусать те пылчăк çине персе анать, вара сиксе тăрса каллех аслашшĕн кĕрĕк аркинчен çавăрса тытать.

Çӳресен-çӳресен вĕсем Сож шывĕ хĕрринчи пĕр шавлă çурт патне çитсе чарăнчĕç. Станислав тем ыйтма хăтланса пуçне çĕклесе пăхрĕ те сасартăк чĕтресе ӳкрĕ. Вăл кĕрĕк аркинчен тытса пыракан çын кĕтмен çĕртенех нимĕç салтакĕ пулса тăчĕ. Станислав урам

варринелле ыткăнчĕ, унтан пахчасем хыçне тухса пĕр лупашкана анчĕ. Вара тин пăртак ларса сывлăш çавăрчĕ те каялла утрĕ.

Площадьре, аллисене хыçалалла тытса, нимĕç салтакĕ хуçалла уткаласа çӳрет.

Аслашшĕне шыраса тупаймарĕ вăл кун Стасик, анчах пасар урамне пырса çавăрăнма шикленчĕ. Кам пĕлет, тен, унта халĕ те нимĕç салтакĕ тăрать пулĕ...

Каçхине çывăраймарĕ вăл. Пĕр çĕре тĕршĕнсе кăтăш пулать çеç — таçта хăйĕн ятне чĕннĕ пек туйăнать те, хайхискер сиксе тăрса унталла чупать. Стасик çитнĕ çĕре сасă местечкăн тепĕр енне куçать.

Унтан таçта виç-тăватă хут пăшал кĕрслетрĕ.

Ирхине вăл, витĕрех шăннăскер, пĕр тăкăрлăкпа ĕнерхи урама мĕкĕлтетсе тухрĕ те тӳрех аслашшĕне курчĕ, савăннипе чупса пырса ыталаса илчĕ. Ватă Казимир темшĕн ярханах, çара пуçăн. Кĕрĕкне йӳле янă. Çӳçĕ çинче сарă улăм пĕрчисем курăнаççĕ.

— Эс чĕрех-им, ачам? — тет вăл Стасик патне пĕшкĕнсе. Хăй мăнукĕ тупăннине ĕненмен пек пулса ăна çаплах пуçĕнчен, çурăмĕнчен ачашлать. — Ăçта çĕр каçрăн, Станислав?

— Сана шырарăм, — тет шăнса кӳтнĕ Стася.

— Эпĕ сана çухалчех пулĕ тесе. Кунта темĕнле халăх та пур та... Тата нимĕççем хытă ашкăнаççĕ. Илтрĕн пулĕ каçхине пăшал пенине? Виçĕ çынна персе пăрахнă тет. Хам та кăшт çеç лекеттĕм...

— Кутамкку ăçта, асатте? Манăн çиес килет те...

— Кутамкка-и? Ăна нимĕç салтакĕ туртса илчĕ.

Ватă çын шиклĕн йĕри-тавра пăхкаласа илет те çывăхра çын çуккине кура каллех калаçма тытăнать.

— Çапла çав, нимĕç салтакĕ илсе кайрĕ ăна, Стасик... Вăрă пек тармарĕ вăл, туртса илчĕ те хулленех утса кайрĕ. Пырса лек-ха эс ун патне кутамккуна илме хăтланса...

Ик-виçĕ çухрăм пек кайсан уйри тын ани çинчи пуш ӳплере вĕсем канма ларчĕç. Айлăмра Сож шывĕ тĕксĕммĕн йăлтăртатса выртать, чĕрĕ сывлăшра пăрахут кăшкăртнисем илтĕнеççĕ. Вăхăтлăха чарăннă çумăр каллех вĕттĕн лăпсăртатма пуçларĕ, айлăма йăсăрланса тăракан çăра тĕтре карса илчĕ.

— Хура кунсем çитрĕç çав, ачам, — тет старик сухалĕ çинчи улăм пĕрчисене тасатса. — Çынсем пек пурăнма тытăннăччĕ кăна, нимĕççем килсе хупларĕç, пурнăçа сывлаймиех туса хучĕç. Мĕн чухлĕ халăх пĕтмерĕ пуль икĕ çул хушшинче, калама та хăрушă... Ытла та ним тума юрамасть вĕт. Çыхса пăрахнă çын пекех хускалмасăр пурăнас пулать... Мана пырĕ ĕнтĕ, эпĕ ватă, анчах сана ку тамăкран хăтарасчĕ... Çак хушăра мĕн пирки час-часах кунта çӳрерĕм пуль тетĕн мана? Эсĕ çамрăк-ха çав, пурне те ăнланса çитейместĕн. Кунтан инçех те мар фронт тăрать. Ун урлă каçса ӳкес пулсан — пурте пулатчĕ санăн... Хĕрлĕ Çар каялла таврăниччен вилсе кайăп та, вара сана та кун пулмĕ.

Старик йӳле янӑ кӗрӗк аркисене хупларӗ те сивӗ ҫӗр ҫине хутланса ларчӗ, куҫне хупрӗ.

— Ватлӑхӑмра хамӑн та ӑшӑ кӗтесре пурӑнса курас килетчӗ... Ытла та ӗшенсе ҫитрӗм вӗт ӗнтӗ эпӗ.

Стасик аслашшӗ ҫине пӑхать. Чӑн та, питӗ те ватӑ иккен унӑн пӗртен-пӗр тӑванӗ, хӳтлӗхӗ. Пичӗсем сарӑхса пӗркеленсе ларнӑ, ҫӳҫӗ мамӑк пекех ҫемҫе те шурӑ. Мӗнле утса ҫитесшӗн-ши вӑл ик ҫӗр ҫухрӑма? Тата инҫе-ши ик ҫӗр ҫухрӑм тени?

— Седличире манӑн пӗр пӗлӗш пурччӗ, — тет старик хурлӑхлӑн. — Сана фронт урлӑ каҫма пулӑшӑп тетчӗ. Халӗ пулмарӗ ӗнтӗ... Ӗнер персе пӑрахнӑ ӑна нимӗҫсем. Хамӑр тӗллӗнех тӑрӑшса пӑхма тивет ӗнтӗ.

* * *

Таса ӗмӗт ҫитме кирлӗ. Вӑл ҫитетех.

Ватӑ Казимир пӗлет: аслӑ Сож шывӗ те вӗҫсӗр мар. Ним тума та ҫук, вӑрҫӑра вӑл ҫитӗннӗ ывӑлне ҫухатрӗ, кинне нимӗҫсем тытса кайрӗҫ. Арӑмӗ те выҫсах вилчӗ. Халӗ ак таврара пур ҫӗрте те нимӗҫсем ашкӑнса ҫӳреҫҫӗ. Анчах вӗсен те шалчи тулма кирлӗ, вӑл тулатех, мӗншӗн тесен тӗнчере Хӗрлӗ Ҫар пур...

Старик хӑйпе юнашар утса пыракан Стасик ҫинчен куҫне илет те Сож еннелле пӑхать. Ҫапла, хальлӗхе унта тӗтре йӑсӑрланса тӑрать, анчах вӑл та сирӗлӗ.

Вӗтӗ ҫумӑр пӗрӗхет, ҫил тулашать. Ватӑ ҫын вӗсене асӑрхамасть. Ури айӗнчи шӗвӗ пылчӑка сирпӗтсе Казимир шавах малалла утать. Кӗҫех ак вӑл киле ҫитӗ. Вара хатӗрленӗ те ҫула тухӗ. Пӗлет старик: йывӑр пулӗ ҫул, ҫапах ҫитес ҫӗре вӑл ҫитмеллех.

Ҫан-ҫурӑмне шӑмӑ таранах сивӗ витнӗ пулин те чӗринче унӑн ӑшӑ та тӳлек...

Пӗр ҫур ҫула пек ҫитсен вӗсем нимӗҫ салтакӗсен ушкӑнне тӗл пулчӗҫ. Салтаксем ҫар ӗҫне вӗренеҫҫӗ пулас, темскер миномётсемпе аппаланаҫҫӗ. Старик вӗсене курмӑш пулчӗ. Вӑл пуҫне ҫӗрелле чикрӗ те Стасике аллинчен тытса ҫул айккинелле пӑрӑнчӗ. Халь ун хӑйне тем тусан та никама та нимӗн те каламалла мар. Мӑнукне фронт урлӑ каҫарса ярсан кирек мӗн тусан та юрӗ вара, мӗншӗн тесен вӑл ватӑ та чирлӗ. Ӑна ӗнтӗ кун чухлӗ пурӑннипе те ҫитет...

Ик-виҫ ҫӗр метр кайсан хыҫалта сасартӑк миномет пенӗ пек кӗрӗслетрӗ, тискеррӗн шӑхӑрса килсе вӗсен умне мина ӳксе ҫурӑлчӗ. Старик мӗн пулнине ӑнланса иличчен тепӗр мина вӗсен хыҫне пырса ӳкрӗ. Ҫывӑхранах осколоксем шайкаса иртсе кайрӗҫ, пылчӑк сирпӗнчӗ.

Сасартӑк юр пек шурса кайнӑ старик Стасика ҫавӑтрӗ те аяккалла ыткӑнчӗ, анчах виҫҫӗмӗш мина вӗсем халӗ кӑна тӑнӑ вырӑна пырса ӳксе иккӗшне те ҫӗре ывӑтса ячӗ.

"Мишень пултӑмӑр иккен..." — ӑнланса илчӗ ватӑ Казимир тӑнне ҫухатас умӗн.

* * *

Стасик сылтӑм аллине ерипен пичӗ ҫине илсе хучӗ, урине хутлатрӗ. Унтан тӑрса ларма хӑтланса чавсисем ҫине тӗренчӗ те, сасартӑк таҫтан вӗҫерӗнсе кайнӑ пек, каллех ҫӗр ҫумне пырса ҫапӑнчӗ. Аллине ҫӗклеме хӑтланса пӑхрӗ — вӑл та йывӑррӑн кӑкӑр ҫине ӳкрӗ.

"Ӑҫта-ши асатте? — шухӑшласа илчӗ вӑл шиклӗн хӑйне килте пек туйса. — Яланах пӗччен хӑварать... Шыв ӗҫесчӗ..."

Шӑп Стасикӑн пуҫӗ тӗлӗнче, кӑн-кӑвак тӳпере, уйӑх ҫутатса тӑрать. Ҫумӑр чарӑннӑ. Кӗрхи уй тӑрӑх сивӗ ҫил йӑштӑртатса юхать. Таҫта аякра-аякра йытӑсем вӗреҫҫӗ, такам пуртӑпа пӗренене шаккани илтӗнет.

Арҫын ача йӗп-йӗпе тара ӳкнӗ. Вӑл йывӑррӑн та хӑвӑрттӑн сывласа ҫаплах тӳпенелле пӑхать, ним ӑнланмасӑр аякри сас-чӗве итлет. Ун сылтӑм аяккине паҫӑртанпах ёнтӗ темскер пӗҫертсе тӑрать. Анчах хускалма вӑй та, кӑмӑл та ҫук. Шыв ӗҫес килни аптӑратмасан капла тахҫанчченех выртма пулассӑн туйӑнать.

Иртнӗ каҫсенчи пекех, таҫта вӑхӑтран вӑхӑта пӑшал переҫҫӗ, унтан йытӑ хамлаткаласа илет. Вара каллех шӑп, ниҫта пӗр сас-чӗвӗ те илтӗнмест. Эх, шыв пулас пулсан!..

Стасик типсе ҫуркаланнӑ тутине чӗлхепе ҫуласа илчӗ те аллине пӗҫерсе таракан ҫӗрелле шутарчӗ. Мӗн хӑямачӗ вӑл, чӑн та? Кӑмаках ҫапла хӗрсе ҫитнӗ-ши?

Аллине темле ӑшӑ та ҫилӗм пек ҫыпӑҫакан япала лекрӗ. Сӑхманӗ те вӑл тӗлте лачкамах пулнӑ. Стасик аллине аран-аран куҫӗ патне илсе пычӗ те сасартӑк тӑрса ларма хӑтланса каллех тӑнне ҫухатрӗ.

Юн! Халӗ вӑл хӑйпе мӗн пулса иртнине те, хӑй ӑҫтине те йӑлтах ӑнланчӗ.

Кӗрхи уй ҫав-ҫавах канӑҫлӑн та тӳлеккӗн сывлать, хыт хурасемпе армутисене хускаткалать. Уй варринче, пӗринчен-пӗри инҫех те мар, икӗ хура мӗлке выртать: пӗри — пӗчӗк Стасик, аллисене сивӗ ҫӗр ҫине саркаласа пӑрахнӑ та тӳпенелле пӑхса выртать; тепри, унӑн аслашшӗ, кӗҫ-вӗҫ сиксе тӑма хӑтланнӑ пек, сылтӑм урине хӑй айне хутлатса хунӑ, аллисем пуҫ айӗнче. Вӑл темиҫе хут та урисем ҫине тӑма хӑтланнӑ пулас, мӗншӗн тесен малтан ӳкнӗ вырӑнтан мӑнукӗ еннелле хуп-хура йӗр тӑсӑлса выртать...

Пӑртакран Стасик тӑна кӗрсе пуҫне ҫӗклерӗ. Вара пӗтӗм чун хавалӗпе тӑрмашса ӳпне май ҫаврӑнса выртрӗ те пуҫне йӗпе курӑк ҫине хучӗ. Капла ӗҫес килни те кӑштах лӑпланчӗ, питне нӳрӗ ҫапрӗ. Мӑнтарӑн чӗрлӗх шывӗ, мӗн пек паха-ши эс ҫут тӗнчере!.. Виҫ-тӑват утӑмра аслашшӗ курӑнать. Майӗпен, чылайччен кана-кана выртса, Стасик ун патнелле упаленме тытӑнчӗ...

— Асатте!..

Старик чӗнмест. Ача хӑй сассинчен хӑй хӑранӑ пек пулса аслашшӗнчен пӗр утӑмра шӑпланса выртрӗ. Текех саспа чӗнесси килмерӗ ун: тепре чӗнсен те чӗнмесен, вӑл вилсех кайнӑ пулсан мӗн тӑвӗ-ха вара Стасик ҫак сивӗ уйра пӗр-пӗччен? Капла ҫапах хӑть ӑшра шанчӑк пур...

Анчах нумаях чӑтса выртаймарӗ, хуллен ахлаткаласа пуҫне аслашшӗн пуҫӗ ҫумне пырса хучӗ. Питне старикӗн нӳрӗ ҫӳҫӗ лексенех унӑн пырне темскер тулса ларчӗ те, вӑл сасӑпах макӑрса ячӗ. Эх, мӑнтарӑн турри, ҫакӑнта ун вӑйӗ пулас пулсан, вӑл йӑтӗччӗ те

хăйĕн аслашшĕне килне илсе кайĕччĕ, ăна нихçан та пĕр сив сăмах каламасăр упраса усрĕччĕ.

Стасик асапланкаласа аслашшĕн хăрах аллине туртса кăларчĕ те, чăх чĕппи амăшĕн çунатти айне тĕршĕннĕ пек, пуçне старикĕн хулĕ айне чикрĕ, чĕлхине аран-аран çавăркаласа пăшăлтатма тытăнчĕ:

— Асатте, тетĕп! Тăрсам ĕнтĕ... Хăратăп эпĕ... Киле каяс килет манăн... Киле... Унтан... Лере те... фронт леш енне те... кайăпăр... Шыв ĕçес килет манăн... Шыв... — Стасик ĕсĕклесе илет те куçне çанни вĕçĕпе шăлса типĕтет. — Макăрмастăп эпĕ... Тăр та... хуллен... кайăпăр... Пулăшăп эпĕ сана. Кăштах канăпăр та... Вара... Мĕн... нимĕçсем те çук халĕ... Курăнмаççĕ вăн... Эпир... çул... айккипе кайăпăр. Утара... куçăпăр пурăнма. Унта шыв та... пур.

Вăл пуçне нӳрĕ çĕр çине хурать те чылайччен татăлса макăрать. Унтан темскер аса илнĕ пек пулса каллех чавса çине тĕренет, хĕвĕнчен çĕтĕк хут татки туртса кăларать.

— Эппин, тӳрех лере утăпăр... Фронт патнелле... Аттене шыраса тупăпăр... Акă унăн сăнĕ... Леш, ху пани... Пĕлтĕртенпех хĕвре чиксе çӳрерĕм эпĕ ăна...

Аслашшĕ чĕнмест. Хăрах аллине туртса кăларнипе пуçне чалăштарса хунă та вăл, çĕрти темле сасса итленĕ пек, куçне хупса выртать. Аяккинчи вĕри ăшнелле кĕнине туйса арçын ача та шăпланать. Сывлăшĕ унăн тăвăрланнăçем тăвăрланса пырать, чĕри хăвăрттăн тапать, куçĕсем хурала-хурала килеççĕ. Анчах пур вилме пуçланă çын пекех, Стасик пурнăç çинчен шухăшлать, пурăнма ĕмĕтленет. Вăл ашшĕн карточкине хĕвне пуçтарса чикет те каллех аслашшĕне ӳкĕтлеме тытăнать:

—Тăрсам ĕнтĕ, асатте... ӳлĕмрен эпĕ киле пĕччен юлсан та макăрмăп. Эсĕ каллех... Седличине çӳре... Анне килсен ăна та илсе кайăпăр... Фронт леш енне. Шыв... та... илĕпĕр... Шыв та...

Стасик аташма пуçлать. Ача аллисене сарса пăрахнă, шурса кайнă пичĕ тăрăх тар шăпăртатса юхать, кăкăрĕ хăвăрттăн хăпара-хăпара анать. Вăл каллех утарта пек: кайăксем чĕвĕлтетсе юрланине, шыв шăнкăртатса юхнине итлет пек...

— Асатте, — тет те вăл тăрса ларма хăтланса суранĕ çине кайса ӳкет, туртăшма пуçлать. — А... сат... те... Чунăм... Шыв... Ил... тетни? Кайăк... сем...

Вăл юлашки хут тăма хăтланса пĕтĕрĕнсе ӳкет те ĕмĕрлĕхе шăпланать.

Уйра та шăп. Çумăр чарăннă. Уйăх та курăнмасть. Уй нимĕн те чĕнмест те, курмасть те, илтмест те. Мăнтарăн уйĕ! Мĕн чухлĕ вилĕ выртмасть пуль сан кăкăру çинче, мĕн чухлĕ куççуль юхмасть пуль сан çырмусемпе варусем тăрăх. Çапла тĕттĕм уйра йытăлла выртса вилме кăна çуралса ӳсет-ши вара, сан ырлăхусемпе усă курса пурăнать-ши вара этем тени?

Çук, уй чĕнмест. Вăл чĕлхесĕр. Уй курмасть. Вăл куççăр.

Çутăлас енне кайсан ватă Казимир тăна кĕрет те уй тăрăх упаленсе çӳресе Стасика шырама тытăнать.

* * *

Эрнесем, уйăхсем иртсе каяççĕ. Каллех çуркунне пулать, кăнтăр енчен ăшă çилсем вĕçсе килеççĕ. Кайăк-кĕшĕк те тахçанах пусма ларнă ĕнтĕ, çилсем те хĕвел ăшшипе хĕртĕнсе хуллентерех çÿреме тытăнаççĕ, канма выртаççĕ. Анчах уйсем пушă та кичем. Никам та хускатман вĕсен кăкăрне кăçал, никам та хĕвел тухăçнелле сăхсăхса илсе пĕр пĕрчĕ вăрлăх пăрахман.

Савăнăç мар, хура инкек çÿрет кăçал Белорусси çулĕсем тăрăх, ырлăх мар, хурлăх пусать çынсен чĕрине.

Çултан инçех те мар пĕчĕк тĕме курăнса выртать. Ун çине хĕрлĕ, шурă, кăвак чечексем шăтса тухнă, сар кайăк йăва çавăрнă.

Тăлăххăн курăнса выртакан çулпа пĕр ватă уксахласа килет. Ун çинче пилĕкне кантрапа туртса çыхнă кивĕ пир кĕпе, улача йĕм. Урисенче çăпата.

Çара пуçăн вăл. Аллине туя тытнă. Унăн куçĕсем чиперех пăхаççĕ пулсан та, нимскер курмаççĕ пулмалла, мĕншĕн тесен ялтан тухнăранпах ĕнтĕ старик куçне сиктермесĕр пĕр çĕрелле пăхса утать.

Пĕчĕк тĕме тĕлне çитсен хайхискер çул айккинелле пăрăнать те вилтăприне хыпашласа тупса ун çумне хутланса ларать. Сар кайăк темиçе утăмра армути çине вĕçсе ÿкет, çунаттисене сарса юрлама пуçлать.

Вĕсем тахçанах пĕрне-пĕри хăнăхнă ĕнтĕ.

Казимир (старик çавă) мĕн хăй ура çине тăнăранпа кашни кунах çак вырăна килсе каять. Хуйхăпа сасартăках куççăр пулса ларнăскер, вăл ывăлин ывăлĕ ăçта выртнине чĕрипе туйса шыраса тупать. Анчах хăйне пăхса сыватнă ял-йышран ват çын мăнукĕ вилни çинчен пĕр сăмах та ыйтса пĕлмест. Ун чĕринче Стасик — сывă. Сывă çеç те мар, вăл тахçанах ĕнтĕ старик ĕмĕтленнĕ çĕре çитнĕ пек, фронт урлă каçнă пек. Тĕнчере усалли темĕн чухлех пулма пултарать пулсан, мĕншĕн пĕрре старикшĕн ырри пулмалла мар?

Вăл пĕлет: чăнлăх çĕнтеретех. Вăл çирĕппĕн шанса тăрать: çăлăнăç килет. Вăл килмеллех, мĕншĕн тесен çăлăнăç çитмесен старике ытла та йывăр пулнă пулĕччĕ, ытла та хÿтлĕхсĕр те сивĕ пулĕччĕç унăн юлашки кунĕсем...

Старик кашни кунах çĕре выртса итлет. Те ытла хытă кĕтнипе таçта аякра-аякра тупă сассисем кĕрленĕ пек туйăнаççĕ ăна. Вара вăл тăрать те хĕвел тухăçнелле пăхса каллех çул çине тухать, ялалла утать.

Юр пек шурă çÿçлĕ суккăр старик хиртен хуллен кăштăртатса таврăннине курсан ял-йыш чышкисене хытăрах чăмăртать...

1943

*Уяр, Х. Тăвансем кĕтеççĕ : [калав] // Уяр, Х. Ăçта эс, тинĕс? / Хветĕр Уяр. – Шупашкар, 2007. – С. 16-25.*